26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАЙ
29
ШАМАТКУН
111(6348) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Машинăпа тракторсен паркне пы сăк тухăçлăхпа ĕçлеттернĕшĕн, ЧАССР Наркомземĕпе Наркомземăн Политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине çаксене кĕртнĕ:

95. **Сĕнтĕр МТС-ĕнчи 1-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **И. В. Кольцов**). Вăл планпа палăртнă 280 гектар вырăнне 316 гектар сухаланă, 94 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

96. **Ишлей МТС-ĕ** (директорĕ **Е. Д. Рязанов**, политотдел начальникĕ **Г. И. Тепеев**, старши механикĕ **И. К. Кириллов**). МТС çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана майăн 20-мĕшĕ тĕлне 101 процент тултарнă.

97. **Елизавета Кузьминична Кузьмина**—Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕнчи трактористка. Вăл планпа палăртнă 45 гектар вырăнне 50 гектар сухаланă, 45 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

98. **Пелагея Григорьевна Григорьева** — Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕнчи трактористка. Вăл планпа палăртнă 65 гектар вырăнне 70 гектар сухаланă, 65 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

99. **Таисия Константиновна Юрусова** — Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕнчи трактористка. Вăл планпа палăртнă 45 гектар вырăнне 55 гектар сухаланă, 66 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

100. **Первомайски МТС ĕ** (директорĕ **В. В. Желтухин**, политотдел начальникĕ **П. И. Иванов**, старши механикĕ **Андачков**). МТС çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана майăн 20-мĕшĕ тĕлне 100,2 процент тултарнă.

Тырпулсемпе пахча-çимĕçсене лайăх пăхса ӳстерер

Совет Союзĕнчи малта пыракан облаçсемпе пĕрле, пирĕн республика та, тĕпрен илсен, çураки ĕçĕсене вĕçлерĕ. Майăн 25-мĕшĕ тĕлне çурхи культурăсем акмалли пĕтĕм плана республика 96,5 процент тултарнă, тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсем акмалли плана 100,7 процент, çĕрулми лартмалли плана 91,8 процент, кантăр акмалли плана 88,1 процент тултарнă. Республикăри 17 район çураки ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçлерĕç. Уйрăмах Элĕк, Вăрнар, Елчĕк, Сĕнтĕр тата ытти районсем кăçал лайăх ĕçлерĕç, вĕсем ĕнтĕ çураки ĕçĕсене пĕтернĕ. Иртнĕ çулсенче кая юлса пынă Первомайски район та кăçал начар мар ĕçлерĕ.

Пирĕн республикăри машинно-тракторнăй станцисем те хăйсен ĕçне тăван, çĕршывпа фронт ыйтнă пек туса пычĕç. Республикăри МТС-сем çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 101,8 процент тултарса 24 тонна горючи перекетлесе хăварчĕç. Плана иртгерсе тултарнă 17 МТС-ран уйрăмах Йĕпреç МТС-ĕ тухăçлăн ĕçлерĕ, вăл çураки планне 189 процент ытла тултарчĕ. Иккĕмĕш вырăна Елчĕк МТС-ĕ йышăнчĕ, вăл плана 160 процент тултарса, 5 тонна ытла горючи перекетлесе хăварчĕ.

Чылай районсем халĕ оборона фончĕ валли тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă колхозсене пулăшма планран ирттерсе тырпул акаççĕ. Çак ĕç валли республика пĕтĕмпе 6.000 гектар ытла акса хăварчĕ те ĕнтĕ.

Анчах çураки ĕçĕсем пур енĕпе те тата пур районсенче те лайăх, каллăн пулса пычĕç тесен тĕрĕс пулмасть. Кувакино, Пăрачкав районĕсем халĕ те çураки ĕçĕсене çуррине ытлашах кăна пурнăçа кĕртнĕ-ха. Çак районсенчи партипе совет организацисен руководителĕсем ĕçри йывăрлăхсене çĕнтерме колхозниксене вăхăтра мобилизацилеймерĕç. Çавăн пекех Шăмăршă, Çĕмĕрле, Чкаловски, Вăрмар, Тăвай районĕсем те çителĕксĕр ĕçлерĕç. Вĕсем халĕ те тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене акса пĕтерейменн-ха.

Республикăри МТС-сем хушшинче те начар ĕçлекенсем пулчĕç. Пăрачкав, Кувакино районĕсенчи МТС-сем çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана çуррине те тултараймарĕç. Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Етĕрне, Чкаловски, Çĕрпӳ районĕсенчи МТС-сем те вĕсенчен нумаях мала кайман. Çак районсенчи ВКП(б) райкомĕсем тата райсовет исполкомĕсем тракторсен паркĕпе тухăçлăн усă курассишĕн çителĕксĕр кĕрешрĕç.

Кунсăр пуçне, кашни культура тăрăх уйрăммăн илсе пăхсан, чылай çĕрте çураки ĕçĕсем пите́х те вăраха кайни курăнать. Сăмахран, чылай районсенче халĕ те кантăр акса пĕтерменн. Йĕтĕн, тымар-çимĕçсем, нумай çул ӳсекен курăксем акас ĕç ытла та юлса пырать. Вĕсене планпа палăртнинчен çурри ытларах çеç акнă-ха. Уйрăмах та махорка лартас ĕç республикăра çителĕксĕр пулса пырать. Майăн 25-мĕшĕ тĕлне плана пĕтĕмпе те 16 процента яхăн çеç тултарнă. Вăрнар, Калинински, Красноармейски, Кувакино районĕсенче вăл ĕçе пачах тытăнман.

Çакă вара пирĕн ĕçри чи пысăк ситменлĕхсенчен пĕри пулса тăрать. Государство панă плана кашни районăн, кашни колхозăн пĕтĕмĕшпе çеç мар, тата кашни уйрăм культура енĕпе те пĕтĕмпех тултармалла. Çавăнпа та техникăллă культурăсемпе тымар-çимĕçсене тата тĕрлĕ куракçене акса хăварас ĕçе татăкланах хăвартлатмалла, çураки ĕçĕсене ăкăçлăн вĕçлесе, тырпулсемпе пахча-çимĕçсене пăхса ӳстерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене пурнăçа кĕртме тытăнмалла.

Малта пыракан районсемпе колхозсем ирхи çĕртме тăваççĕ, уйхирсене çумкурăкĕсенчен тасатас ĕçе хĕрӳллĕн тытăнаççĕ. Елчĕк районĕнчи колхозсем майăн 27-мĕшĕ тĕлне 1.876 гектар çинче çум çумланă. Ленин ячĕпе тăракан колхозра ку ĕçе аван организациленĕ. Колхоз 361 гектар çинчи тĕштырра, 22 гектар кок-сагыза çумкурăкĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Çум çумлас ĕç Йĕпреç, Канаш, Калинино тата ытти районсенче те анлăн сарăлса пырать.

Çуртыррисем лайăх шăтса тухрĕç. Вĕсем кăçал тырпул тухăçлă пулас шанчăкпа ӳстереççĕ. Анчах вĕсемпе пĕрле çумкурăкĕсем те çĕкленеççĕ. Вăйлă тырă туса илес тесен, пирĕн çумкурăкĕсемпе кĕрешес ĕçе вăйлатмалла, тырпула ирĕклĕн ӳсме майсем туса памалла, уйрăмах вăрлăх участокĕсене таса тытмалла.

Вăйлă тырпулпăн кĕрешекен колхозсем тырра лайăх акса хăварнипех лăплаланмаççĕ, ăна лайăх пăхса ӳстерме тăрăшаççĕ, тăпрари нӳрлĕхе сыхласа хăварас енĕпе тĕрлĕ ĕçсем тăваççĕ. Тăпрари нӳрлĕхе сыхласа хăвармалли майсенчен пĕри вăл—мульчировани туни тата тырпул акнă участоксене сӳрелени пулса тăрать. Ку таранччен пирĕн колхозсем кĕрхи культурăсен калчисене кăна сӳреленĕ тата мульчировани тунă. Чылай колхозсем халĕ çурхи тырăсен калчисене те сӳрелеççĕ, вĕсене акнă участоксене мульчировани тăваççĕ, çапла майпа тăпрара ытларах нӳрлĕх сыхласа хăвараççĕ. Малта пыракан колхозсен çак паха примерне республикăра анлăн сарса пырас пулать тата вăл ĕçе васкатас пулать, мĕншĕн тесен вăхăт кĕтмест, вăхăт иртсен вара вăл ĕçĕн усси те сахалланма пултарать.

Колхозсен çĕрĕсем пур çĕрте те пĕр пек мар: лайăххисем те начартараххисем те пур. Çавăнпа та тырпул та тĕрлĕ ӳсет. Начартарах шăтса тухнă участоксенче тырпула апат пани кирлĕ. Калчасене апат панă чухне кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе, кĕлпе, минераллă удобренисемпе, тислĕк шывĕпе анлăн усă курмалла. Çакна тунă çĕре ака ĕçĕнчен пушаннă колхозниксене тата комсомолецсемпе ытти çамрăксене явăçтармалла.

Тырпулсене, уйрăмах пахча-çимĕçсемпе техникăллă культурăсене хурт-кăпшанкăсем пысăк сиен кӳме пултараççĕ. Колхоз председателĕсемпе бригадирсен тырпулсене сиенлекен хурт-кăпшанкăсем палăрнине сăнаса тăрас ĕçе организацилес пулать, вĕсемпе кĕрешме кирлĕ инструментсемпе химикатсене хатĕр тытас пулать. Сиенлĕ хурт-кăпшанкăсем ан ĕрчеччĕр тесе, пахча-çимĕçсемпе техникăллă культурăсем акнă вырăнсенче ретсемпе йăрансем хушшине тăтăшах кăпкалатса, тасатса тăрас пулать.

Çак çулте асăннă ĕçсене чăннипех тĕплĕн туса пымасăр вăйлă тырпул туса илме çук. Халĕ эпир, çуркуннехи ака ĕçĕсене лайăх пахалăхпа, лайăх сроксенче туса ирттерсе, вăйлă тырпулăн çирĕп никĕсне хывса хăвартăмăр. Анчах пирĕн çурхи ĕçсен тухăçлăхĕ пысăк пултăр тесен, тырпулсене лайăх пăхса ӳстерес пулать. Çавăнпа та колхозсен малашнехи тĕп задачи вăл — тырпулсене лайăх пăхса ӳстересси, вĕсене пухса кĕме тĕплĕн хатĕрленесси пулать.

Сталинград трамвайне ĕçе яраççĕ

Сталинградра тăшман аркатса тăкна трамвай хуçалăхне тепĕр хут йĕркелесе ярас тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлеççĕ. Чи малтанах трамвай çулĕпе хулан вăтам пайне çурçĕр тата завод районĕсемпе çыхăнтарма шутлаççĕ.

Трамвай деповĕнче 15 станока юсанă, тăшмантан тытса илнĕ пресводсене пухса çитернĕ, моторла тата кăкарса çӳрекен вагонсене юсама пуçланă. Пĕр подстанцие ĕçе яма хатĕрленĕ, тепĕр икĕ подстанци тума пуçлаççĕ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 27-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Кубань таврашĕнче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра, çапăçусем пыраççĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Майăн 26-мĕшĕнче пирĕн авиаци часĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне çитн, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, 2 чугунçул эшелонне çĕмĕрнĕ, артиллерин 16 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пирĕн артиллери тăшманăн артиллери батарейине тата 6 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче 8 нимĕç самолетне персе ӳкернĕ. Тăшманăн çав самолечĕсем пурте пирĕн территори çине ӳкнĕ.

* * *

Калинин фронтĕнче пĕр чăсăн разведка тăвакан отрячĕ тăшман йышăннă калăх пурăнакан пункта вăркăнса кĕнĕ те унти нимĕç гарнизонне пĕтерсе тăкнă. Çав ялти çапăçура нимĕçсен 113 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 90 салтакĕпе офицерне амантнă. Пирĕн разведчиксем боеприпассен складне, япаласен складне сирпĕнтерсе янă тата темиçе çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чăçсем нимĕç пехотине пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă, 6 блиндажа ишĕлтерсе антарнă, артиллерин темиçе батарейине пусарса лартнă. Пĕр соединенин снайперĕсем 3 уйăх хушшинче 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çитн вĕлернĕ. Снайпер старшина Юдин юлташ 105 гитлеровеца, снайпер Коровкин юлташ 51 гитлеровеца, снайпер Рудь юлташ 47 гитлеровеца, снайпер Головчев юлташ 44 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Карели фронтĕнчи пĕр участокра пĕр чăсăн разведчикĕсем белофинсен тĕреклетнĕ пунктне сасартăк тапăннă та ăна тытса илнĕ. Тăшман гарнизонĕн пысăк пайне вĕлерсе пĕтернĕ. Çав пунктри укреплениÿсене сирпĕнтерсе янă. Темиçе çынна тыткăна илсе, 9 пулемет, винтовкăсем тата радиостанци тытса илсе, пирĕн боецсем хăйсен чăçне таврăннă.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн артиллеристсем нимĕçсен позицийĕсене тата сывăхри тылĕсене пенĕ. 9 дзота тата 6 блиндажа ишĕлтернĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Красноармеец Назаренко юлташ тăшман бомбардировщикне противотанковăй пăшалпа персе ӳкернĕ.

* * *

Украинăри районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен концентрациллĕ лагерьне сасартăк вăркăнса кĕнĕ. Çав лагерĕн хĕсмăшаллă хуралне вĕлерсе пĕтерсе, партизансем лагерьте пурăннă 60 совет гражданне ирĕке кăларнă. Волынь облаçĕнче кĕрешекен партизансем тăшманăн 2 чугунçул эшелонне сирпĕнтерсе янă. 2 паровоз тата 15 вагон çĕмĕрĕннĕ, çав вагонсенчен 7-шĕнче войскăсем пулнă. Чугунçулăн çав участокĕнче вара поездсем çӳреме чарăннă.

* * *

Нимĕçсен 4-мĕш группăри 3-мĕш разведка отрядĕнчи «Мессершмитт-110» самолетăн пилочĕ—тыткăна лекнĕ обер-фельдфебель Отто Эльд çапла каласа панă: «Пирĕн группăна нумаях пулмасть организациленĕ. Пĕр эрне каялла ăна Хĕвелтухăçĕнчи фронта ячĕç. Штат тăрăх 3-мĕш отрядра 9 самолет пулмалла. Анчах вĕсенчен çурри юрăхсăра тухнă ĕнтĕ. Пĕр самолет Германирен вĕçсе килнĕ чух çĕмĕрĕлнĕ, иккĕмĕшĕ атапса кайса ирĕксĕр анса ларнă чухне çĕмĕрĕлнĕ, 2 самолета вырăс летчикĕсем персе ӳкернĕ. Манăн самолета чугунçул районĕнче вырăс зенитки снарячĕ тӳррĕн лексе персе ӳкерчĕ. Нимĕç авиацийĕ тунă çухатусем çинчен нимĕçсем официальнăй йĕркепе пĕлтернисене никам та ĕненмест. Вăл пĕлтерӳсене вуланă чухне вара час-часах çав суя сăмаха тупса кăларакансенчен кулаççĕ, тăрăхлаççĕ. Нумай сăнаса эпĕ çакна пĕлтĕм: Российăра пулнă летчиксем унта тепĕр хут кайма пĕртте кăмăл тумаççĕ. Эпĕ те фронта килесшĕн марччĕ, мĕншĕн тесессĕн Германия поражени тӳсесрен çăлăнса юлма пултарайманни маншăн паллă. Çĕнтерме шанчăк çухалсан — çапăçма çук вара».

* * *

Югославири партизансем нимĕçсемпе итальянецсен дивизийĕсене хирĕç, партизансем нумаях пулмасть йышăннă территорие çĕнĕрен оккупацилеме хăтланакансене хирĕç, хаяррăн çапăçаççĕ. Патриотсем çĕрĕ кашни пусăмне питĕ вăйлăн хӳтĕлеççĕ, тăшманăн атакисене сирĕ-сире яраççĕ. Мойковец патĕнчи çапăçусенче 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Партизансем Винница местечкине ăнăçлăн пырса тапăнса, унти итальянецсен гарнизонне аркатса тăкнă. Гарнизон начальникне вĕлернĕ. Нумай итальянец салтакĕсем тыткăна парăннă. Тепĕр районра партизансем оккупантсемпе çапăçса 60 çынна тыткăна илнĕ, 40 винтовка, 5 пулемет, 2.000 патрон тата тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

Майăн 28-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Хура тинĕсре пирĕн карап тата самолетсем тăшманăн хăй тĕллĕн çӳрекен 2 баржине шыва путарнă.

Пирĕн инçене вĕçекен авиаци çĕрле нимĕçсен темиçе аэродромне тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе пушарсем нумай тухнă тата вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн артиллеристсем тăшманăн оборона сооруженийĕсем çине тата пĕр çĕре пухăнса тăнă пехоти çине темиçе хутчен те вăйлăн персе илнĕ. 5 дзота çĕмĕрсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă тата нимĕç пехотине пĕр ротăна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн пĕр участокĕнче тăшман отрячĕ пирĕн позицисене çапăçса разведка тăвасшăн пулнă. Пĕр чăсăн боецĕсем гитлеровецсене малтанхи рубежа ывăтса янă, хăшĕсене тыткăна илнĕ. 3-мĕш авиапехотнăй дивизин çав çапăçура тыткăна илнĕ ефрейторĕ Эрих Болен çапла каласа панă: эпĕ пурăннă рота юлашки уйăхра оборонăра тăрса, вилнисене кăна шутласан та, 40 çынна ытла çухатнă, тенĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити вĕлернĕ, 17 дзота, 15 землянкăна тата 2 наблюдательнăй пункта çĕмĕрсе тăкнă. Старши сержант Бойчук ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ çĕрле нимĕçсем тăнă вырăна кĕрсе кайнă. Разведчиксем тăшман дзотне çавăрса илнĕ те 9 гитлеровеца вĕлернĕ тата темиçе çынна тыткăна илнĕ.

Ленинград çывăхĕнче сывлăшри çапăçусенче пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен 8 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Гомель облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕн пĕр ушкăнĕ майăн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсен фронт линийĕ патнелле пыракан 2 эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 2 паровоз, 23 платформа тата 11 вагон çĕмĕрĕлсе кайнă. Минск облаçĕнче пĕрлешекен отрядри партизансем май уйăхĕнче нимĕçсен 5 поездне ӳпĕнтерсе янă. Çав операцисенче 5 паровоз, боеприпассем турттарса пыракан 15 вагон, войскăсем илсе пыракан 6 вагон, хĕçпăшалсемпе продовольстви тата ытти грузсем тиенĕ 18 вагон çĕмĕрĕлсе кайнă. Темиçе вуншар гитлеровец вилнĕ. Нумай вырăнсенче чугунçул линине пăснă.

* * *

Карл Дерплер ятлă çын Альфред Шадт ятлă нимĕç лейтенанчĕ патне янă çырура Англи авиацийĕ Германин çар промышленноçĕпе машинăсем тăвакан промышленноçĕн чи пысăк центрĕсенчен пĕрне—Штутгарт хулине тапăнни çинчен пĕлтерет. «Манăн хаклă шăллăм Альфред! Эпĕ сана нимĕнле ырă хыпар та пĕлтерме пултараймастăп. Апрелĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн хулана сывлăшран вăйлăн тапăнчĕç. Тревога 2 сехет хушши пычĕ. Пуринчен ытла заводсене сиен турĕç. Мĕн тери аркатнине шута илме те çук, пур çĕрте те ишĕлчĕк тата ванчăк куписем. Çавăн пек тата темиçе хут тапăнасран хăраса тăратпăр, вара кунта урăх нимĕн те тăрса юлмасть».

* * *

Норвеги патриочĕсем нимĕç оккупанчĕсен боеприпассем хунă складне тапăннă. Патриотсем хурал тăракан салтаксене вĕлерсе тăкнă та склада вут тивертсе янă. Драмменре нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен формине тăхăннă норвежецсем пăшал складне кĕрсе кайнă та 2 грузовик винтовкăсемпе автоматсем тиесе тухса кайнă. Осло районĕнче патриотсем нимĕç çарĕсене турттарса пыракан 2 поезда пĕр-пĕринпе çапăнтарнă. Çав крушенире гитлеровецсем нумай пĕтнĕ.

К. А. Тимирязев çуралнăранпа 100 çул тултарнă тĕле

Кăçалхи июнĕн 3-мĕшĕнче К. А. Тимирязев çуралнăранпа 100 çул тултарать. Совет çĕршывĕнчи наука организацийĕсем çав куна анлăн паллă туса ирттерме хатĕрленеççĕ. СССР Наукăсен академийĕ Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх наукисен Ленин ячĕпе тăракан академийĕпе, Тимирязев ячĕпе тăракан ялхуçалăх академийĕпе, Ломоносов ячĕпе тăракан Мускаври государство университечĕпе тата çутçанталăка сăнакансен Мускаври обществипе пĕрле чаплă лару туса ирттерет.

СССР Наукăсен академийĕн биологи отделенийĕнче, Тимирязев ячĕпе тăракан академире тата Мускаври университетра научнăй сессисем пулса иртеççĕ. (ТАСС).

Иван Дмитриевич Папанина çар званийĕ—контр-адмирал званине парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ПОСТАНОВЛЕНИЙĔ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Иван Дмитриевич Папанина СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званине—контр-адмирал званине пама йышăнать.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.
СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1943 ç., майăн 25-мĕшĕ.

Василий Иванович Кузнецов юлташа çар званийĕ—генерал-полковник званине парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ПОСТАНОВЛЕНИЙĔ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Василий Иванович **Кузнецова** СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званине — генерал-полковник званине пама йышăнать.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.
СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1943 ç. майăн 25-мĕшĕ.

Элĕк районĕнчи Самушкино колхозĕн колхозникĕсем Совет Союзĕн Геройĕ М. Е. Ефимов патне янă çыру

Сывă-и, хаклă Мирон Ефимович!

Эсир пирĕн пата янă çырăва эпир пысăк савăнăçпа вуларăмăр. Эсир унта хăвăрăн боевой ĕçсем çинчен пĕлтернĕ. Эсир фронтра паттăррăн çапăçни пире колхоз уйхирĕсенче хĕрӳллĕн ĕçлеме хавхалантарчĕ.

Эсир пире колхоз производствинче тăрăшса ĕçлеме чĕнетĕр. Çĕршыв умĕнчи тата Сирĕн, Мирон Ефимович, умри тивĕçе чыслăн пурнăçлас тесе, эпир ырми-канми ĕçлетпĕр. Республикăра çураки ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Эпир Сире çакăн çинчен пĕлтерме шутларăмăр: пирĕн колхоз çуракине кĕске вăхăтра—10 ĕçкунĕнче вĕçлерĕ. План тăрăх колхозăн çурхи тырăсене 111,5 гектар акмаллаччĕ, эпир 114,5 гектар акрăмăр, вăл шутран оборона фончĕ валли 3 гектар акнă. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене те вăхăтра лартса хăвартăмăр.

Çураки вăхăтĕнче колхозниксемпе колхозницăсем мĕнпур вăя хурса ĕçлерĕç. Сирĕн тăван асу—Ефим Васильевич Васильев уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартса пычĕ. Вăл сухаçă пулса ĕçлерĕ, нормăна кулленех ирттерсе тултарчĕ. Çавăн пекех сӳрелекен Февронья Петрова, акакан Федосия Никифорова юлташсем те тухăçлăн ĕçлерĕç. Агитатор М. Бычкова кашни кунах уйра ĕçлекенсем хушшинче каласусемпе докладсем ирттерчĕ, хаçатсенчи çĕнĕ хыпарсене вуласа пачĕ.

Çураки вăхăтĕнче обществăллă столовăй ĕçлерĕ. Татьяна Скворцова колхозница тăрăшнипе уйра ĕçлекенсене кашни кунах тутлă та вĕри апат çитерчĕç.

Анчах пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те пур. Колхозăн лашасем мăнтăр мар-ха, вĕсем валли инвентарьсем çителĕксĕр.

Пĕтĕмпе илсен колхоз выльăх-чĕрлĕх усрамалли плана тултарнă, анчах вĕсен продуктивноçĕ пĕчĕк-ха.

Асăннă çитменлĕхсене эпир кĕске вăхăтрах пĕтерме тăрăшатпăр.

Пирĕн умра халь пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Ирхи çĕртме тумалла, çум çумлас ĕçе тытăнмалла, тырпула пухса кĕме тĕплĕн хатĕрленсе çитмелле, ăна вăхăтра тата пĕр тăккамасăр пуçтарса кĕртмелле.

Кăçал эпир гектартан 13 центнертан кая мар тĕштырă пухса илме обязательство илнĕ. Çак обязательствăна чыслăн пурнăçлассишĕн кĕрешетпĕр.

Эсир хăвăрах пĕлетĕр, пирĕн Чăваш республикине кăçал ялхуçалăхĕнче лайăх ĕçленĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куссa çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата иккĕмĕш премине пачĕç, çавăн пекех пирĕн Элĕк районĕ те Пĕтĕм Союзри ăмăртура 3-мĕш премине илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çакă пире малашне татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме хушать.

Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ мĕнпур ĕçсынисене çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалентарчĕ. Асăннă çулпуçăн хĕрӳллĕ сăмахне ялан асра тытса, эпир хамăрăн вăй-хăвата пултарулăха тăван çĕршывпа фронтшăн усăллă ĕç тунă çĕре тата ытларах пама пулатпăр, çапла вара фронтпа тăван çĕршыва ытларах та ытларах ялхуçалăх продукчĕсем парса тăма тăрăшатпăр.

Колхоз председателĕ А. СЕКРЕТАРЕВ, парторганизаци секретарĕ А. МОРОЗОВА, ВЛКСМ организаци секретарĕ А. ГАВРИЛОВ, агитатор М. БЫЧКОВА, колхозниксем: Е. ВАСИЛЬЕВ, В. ЕФИМОВ, Ф. ПЕТРОВА, Ф. НИКИФОРОВА, Т. АЛЕКСЕЕВА, Е. ДИМИТРИЕВА, Т. БЕЛОВА, Т. СКВОРЦОВА т. ыт. те.

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕсем

ÇАР ĔÇНЕ ЛАЙĂХ ВĔРЕННĔ

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Турханти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем кăçалхи вĕренӳ çулĕнче çар ĕçне тăрăшса вĕреннĕ. Çар ĕçне вĕрентекен Мурашкин юлташ занятисене яланах лайăх хатĕрленсе ирттернĕ. Çакă вăл халĕ, пĕлӳ тĕрĕслевĕнче, уççăн курăнчĕ.

6-мĕш класра 20 ача вĕренет. Малтанхи кун унта естествознанипе (преподавателĕ Богникова) тĕрĕслӳ пулчĕ. Вĕренекенсенчен 50 процентĕ «отлично», 35 процентĕ «хорошо», ыттисем «посредственно» паллăсем илчĕç. Çакăн хыççăн ку класс çар предмечĕпе тĕрĕслӳре пулчĕ. Кашни вĕренекен хăйне панă ыйтусем çине лайăх ответлерĕ, класри вĕренекенсем пурте «отлично» паллăсем илчĕç.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕнче 7-мĕш класра вĕренекенсен 57 процентĕ «отлично», 36 процентĕ «хорошо» паллăсем илнĕ. 5-мĕш класра та çавăн пекех. 18 вĕренекентен 12-шĕ «отлично» е «хорошо» паллăсем илнĕ.

ВĂРМАР РАЙОНĔНЧИ ШКУЛСЕНЧЕ

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем уйрăмăнах Кавалти тата райцентрти вăтам шкулсенче пысăк çĕкленӳпе иртеççĕ. Кавалти вăтам шкулăн 10-мĕш класĕнче вĕренекенсем пурте алгебрăпа «отлично» тата «хорошо» паллăсем кăна илнĕ.

Райцентрти вăтам шкулта (директорĕ Евдокимов юлташ) пĕлӳ тĕрĕслевĕсене вĕренекенсен 99,7 процентĕ йĕркеллĕн çӳрет. Майăн 25-мĕшĕнче вĕренекенсен 95 процентĕ пур предметсем тăрăх та «начар» тата «питĕ начар» паллăсем пачах илмен. Тĕрĕслевсем уйрăмах географипе (5-мĕш «А» класс), алгебрăпа (10-мĕш класс), вырăс чĕлхипе (9-мĕш класс) ăнăçлăн иртнĕ.

Малта пыракан шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме тытăннă. Шăхальри вăтам шкулта вĕрентекенсемпе вĕренекенсем (шкул директорĕ Миляков юлташ) хăйсен вăйĕпе 200 кубометр вутă хатĕрленĕ.

КРОСА 1319 ÇЫН ХУТШĂННĂ

ÇĔМĔРЛЕ. Малтанхи икĕ кун хушшинче кроса 1.319 çын хутшăнчĕ, вĕсенчен 312 комсомолец, 155 колхозник. ГТО тата БГТО значокĕсен нормисене 917 çын пачĕ.

Кроса пĕрремĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ активлăн хутшăнчĕ (военрукĕ—отечественнăй вăрçă участникĕ М. Долгов юлташ). Кунта кроса хутшăннă 142 çын пурте тенĕ пекех БГТО нормисене панă. Алексимов БГТО значокĕн нормисем тăрăх 500 метра 1 минута та 52 секундăра чупса тухрĕ, гранатăна 35 метр инçете ывăтрĕ тата пластунла шуса лайăх результатсем кăтартрĕ. Ермишин—500 метра 1 минута та 53 секундăра чупса тухрĕ, гранатăна 34 метр ывăтрĕ.

Осоавиахим членне кĕреççĕ

ЭЛЕК. Панклири туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем, пурĕ 32 çын, çак кунсенче Осоавиахим членне кĕчĕç. Осоавиахимовецсем вăрçă ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ. 34 ача ПВХО тата ГСО значокĕн нормисене пачĕç.

А. Тимофеев.

Республика уйхирӗсенче

Республикӑри колхозсенче ҫураки ӗҫӗсем майӑн 25-мӗшӗ тӗлне мӗнле пынине кӑтартакан СВОДКА

(процентпа)

Районсем	[illegible]	[illegible]	[illegible]	Кантӑр	[illegible]
Элӗк	105,8	109,1	100,3	100	—
Ишлей	105,4	106,4	100,5	87,1	—
Сӗнтӗр	104,4	108,2	100,3	89,0	—
Сӗнтӗрвӑрри	103,8	105,9	102,0	88,2	—
Вӑрнар	103,7	108,5	110,8	106,1	—
Шупашкар	103,3	105,7	108,7	103,0	—
Советски	102,8	107,5	100,5	90,0	—
Елчӗк	102,3	109,1	105,0	97,5	—
Етӗрне	102,0	102,1	100,0	79,1	—
Ҫӗрпӳ	101,7	105,0	99,7	94,3	6,1
Комсомольски	101,3	108,8	94,8	98,6	75,0
Красноармейски	100,7	103,5	100,0	95,0	0,7
Шӑмӑршӑ	100,5	103,6	100,0	109,0	—
Куславкка	100,4	101,6	90,7	55,0	—
Первомайски	100,1	104,8	90,4	105,2	—
Калинински	100,0	106,0	98,3	97,8	—
Хӗрлӗ Чутай	100,0	104,3	97,7	100,2	16,9
Октябрьски	97,5	102,6	88,0	70,0	—
Патӑрьел	95,7	105,9	91,3	134,0	14,0
Канаш	95,7	104,2	88,4	98,6	—
Чкаловски	93,2	95,7	83,8	72,5	—
Вӑрмар	92,9	98,0	72,5	58,2	—
Тӑвай	92,6	100,0	71,8	50,2	15,0
Улатӑр	92,3	100,7	81,3	—	49,0
Шӑхасан	91,6	93,5	99,9	57,1	—
Сӗмӗрле	91,4	98,7	81,4	105,0	4,0
Пӑрачкав	85,4	98,1	45,4	—	25,5
Куйбышевски	75,5	65,4	16,3	—	—
Шупашкар хули	98,5	123,1	162,0	—	—
ЧАССР тӑрӑх	93,5	100,7	91,7	83,1	15,7
Майӑн 20-мӗшӗ тӗлне пулнӑ	91,6	98,1	77,2	72,9	13,5

Уйхире ҫумкурӑкӗсенчен тӗппӗн тасатар

ЕЛЧӖК, майӑн 28-мӗшӗ. (Телефонпа). Тырӑсем лайӑх шӑтса тухрӗҫ. Вӗсемпе пӗрлех ҫумкурӑкӗсем те вӑйлӑ ӗлме тытӑнчӗҫ. Ӑнӑҫлӑн акса хӑварнӑ тырпула лайӑх пӑхса ӳстермелле. Уйхире ҫумкурӑкӗсенчен тасатмалла. Калчасене ӳсме тӑпра нӳрӗкне сыхласа хӑвармалла. Ҫак ӗҫсем халӗ колхозниксем умне анлӑн тухса тӑчӗҫ. Вӑл задачӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пынинчен тырпул тухӑҫлӑн пулассӑ нумай килет.

Пирӗн районри колхозниксемпе колхозницӑсем ҫак иртнӗ 7—8 кун хушшинче 1.876 гектар ҫинчи тырӑсене ҫумкурӑкӗсенчен тасатрӗҫ. Вӑл шутра кок-сагыз плантацийӗсем пур. Ҫум ҫумлас ӗҫе уйрӑмах Ленин, Ворошилов ячӗсемпе тӑракан, «Комбайн» колхозсем аван организацилерӗ. Ленин ячӗпе тӑракан колхоз 361 гектар тӗштырӑ, 22 гектар кок-сагыз акнӑ вырӑнсене ҫумкурӑкӗсенчен тасатнӑ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра ҫак ӗҫе 214 гектар ҫинче, «Комбайн» колхозра 184 гектар ҫинче тунӑ. «Марс» колхоз членӗсем ҫумкурӑкӗсемпе кӗрешес ӗҫе ҫуракинченех пуҫланӑ. Ҫӗре тарӑн сухаларӗҫ, уйхирте ҫумкурӑкӗсене ӳсме памасҫӗ вӗсем. Тӗштырӑсем акнӑ пӗтӗм ҫӗр лаптӑкне вӗсем пӗрремӗш хут ҫумкурӑкӗсенчен тасатса тухрӗҫ.

Ҫум ҫумлас ӗҫре халӗ районра кулленех 2.428 ҫын ӗҫлет.

Ҫавӑн пекех ҫурхи тырӑ калчисене сӳрелес ӗҫ те вӑйлӑланса пырать. Паянхи куна пурӗ 3.200 гектар ҫинчи калчасене сӳреленӗ, ҫӗрулми вырӑнӗсене якатнӑ. Ленин ячӗпе тӑракан колхозра ҫак ӗҫе 770 гектар ҫинче тунӑ. Вӗри ҫанталӑк пуҫланиччен ҫурхи тырӑсен калчисене ҫумкурӑкӗсенчен тасатса пӗтермелле, сӳрелесе тӑпран нӳрӗкне нумайлӑха упраса хӑвармалла.

С. МАКАРОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Ирхи ҫӗртме тума васкамалла

КУКЕҪ, майӑн 28-мӗшӗ. (Телефонпа). Ирхи ҫӗртме — кӗрхи тырӑсем тухӑҫлӑ пулассин никӗсӗ. Ирхи ҫӗртмене пирӗн кӑҫал уйрӑмах иртерех туса хӑварма тӑрӑшмалла, тӑпра нӳрӗкне упраса хӑварассипе кӗрешмелле.

Районри МТС бригадисем ҫураки ӗҫӗсене вӗҫленӗ хыҫҫӑнах тракторсене ирхи ҫӗртме тунӑ ҫӗре куҫарчӗҫ. Майӑн 27-мӗшӗ тӗлне тракторсем пурӗ 900 гектар ҫинче ирхи ҫӗртме турӗҫ. Анчах чылай колхозсем халь ирхи ҫӗртме тума тытӑнман-ха.

[illegible]ӑхӑта сая ямасӑр, ирхи ҫӗртме [illegible]а халех пур колхозсенче те тух[illegible]ла. Кӗрхи тырӑсем акмалли пусса [illegible]ӑк пахалӑхпа вӑхӑтра сухаласа [illegible]рмалла.

Н. ВАСИЛЬЕВ,
Райҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗ.

[illegible]осударствӑна ҫӗнӗ тырӑ параҫҫӗ

АШХАБАД, майӑн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Ашхабадри «14 лет Октября» колхоз (председателӗ Ата Кельджаев юлташ) 55 гектар кӗрхи урпа вырса пуҫтарса кӗртнӗ. Ӗнер ҫав колхоз Заготзерно пунктне пӗр машина ҫӗнӗ урпа тиесе янӑ.

Вырса илнӗ тырра ҫапас ӗҫ хӗрӳллӗн пырать. Малтанхи сарӑмсене ҫапса илнӗ тӑрӑх, гектар ҫинчен вырса илнӗ тырӑран 30 центнера ҫити таса тӗш тырӑ тухать, вӑл пӗлтӗрхинчен чылай ытларах пулать.

Паян тумалли агротехника ӗҫӗсем

Мульчировани тӑвӑр

[illegible]

Ҫуртырӑсене сӳрелӗр

[illegible] ҫумкурӑкӗсене пӗтерме пулӑшать, тепӗр енчен—сӳрелесен ҫӗрӗн ҫиелти пирченнӗ сийӗ тӗпренсе ваҫать, тӑпрана кӑпкалатса хӑварать, ҫурхи тырӑ калчисем вара нимӗн чухлӗ те сиенленмеҫҫӗ. 1937 ҫулта Кузнецкри опытлӑ стан- [illegible]

Ҫурхи тырӑсене пахча-ҫимӗҫсене удобрени парӑр

[illegible]

Пӑрса йышши культурӑсем ҫине фосфорпа кали удобренийӗсем тӑкмалла, тӗштырӑсем ҫине ҫак удобренисемпе азотлӑ удобренисемпе хутшӑнтарса тӑкмалла.

Агроном М. САРРЭ.

Кантӑр вырӑнӗсене мульчировани тӑваҫҫӗ

ЭЛӖК, майӑн 29-мӗшӗ. (Телефонпа). Пирӗн районри колхозсем кӑҫал 800 гектар ҫине кантӑр акса хӑварчӗҫ. Кантӑр вырӑнӗсене тислӗк нумай хурса, тарӑн сухаларӗҫ, пысӑк тухӑҫлӑ кантӑр ӳсмелли майсене пурне те пурнӑҫларӗҫ.

Халӗ вӑхӑтӑн-вӑхӑтӑн вӑйлӑ ҫумӑрсем пулса иртрӗҫ. Кантӑр вырӑнӗсем витӗрех исленсе нӳрленчӗҫ. Ҫав нӳрре сыхласа хӑварас тӗллевпе районри колхозсенче кантӑр вырӑнӗсене мульчировани тӑвас ӗҫ анлӑн сарӑлчӗ. Колхозниксем ик-виҫ ҫул хушши выртнӑ кивӗ вак улӑма пухса, вӗсемпе кантӑр вырӑнӗсене 2—3 сантиметр хулӑмӗш витеҫҫӗ.

Ҫапла халӗ кантӑр вырӑнӗсене пурӗ 673 гектар мульчировани тунӑ.

А. ВОЛКОВ,
Райҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗ.

Тырпулсен, пахча-ҫимӗҫсен тухӑҫлӑхне ӳстерме

СӖНТӖР, майӑн 28-мӗшӗ. (Телефонпа). Ҫураки ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн вӗҫленӗ хыҫҫӑнах районра калчасене лайӑх пӑхса ӳстерес кампани пуҫланчӗ. Колхозсем уйхирсене ҫумкурӑксенчен тасатас ӗҫе организованно тытӑнчӗҫ. «Свобода» колхоз членӗсем иртнӗ эрнере уя кар тухса, кӗрхи тырӑсене 60 гектар тата 20 гектар ҫинчи клевера ҫумкурӑксенчен тасатрӗҫ. «Колос» колхозра халӗ 36 гектар ҫинчи кӗрхи тырӑсене, 30 гектар клевера ҫумкурӑксенчен тасатнӑ. Ку колхозсенче ҫак ӗҫре кулленех 20—30 колхозник ӗҫлет.

Ҫавӑн пекех районра ҫурхи тырӑсене мульчировани тӑвас ӗҫ те сарӑлса пырать. Майӑн 27-мӗшӗ тӗлне пурӗ 470 гектар ҫинчи калчасене мульчировани тунӑ. Малта пыракан «Свобода» колхоз ҫак ӗҫре кивӗ вакӑ улӑмпа анлӑн усӑ курать. Паянхи куна кунта ҫурхи тырӑсем акнӑ участоксем ҫине (пурӗ 62 гектар ҫине) кивӗ вакӑ улӑма сӳхен хурса тухнӑ.

Тырӑсене ӳсме тӑпрара нӳрлӗх нумай кирлӗ. Кӑҫал тырӑсене шӑварас ӗҫе те анлӑн сарма тивет. Тырӑсене лайӑх пӑхса ӳстермелли пур мерӑсене те вӑхӑтра йышӑнмалла. Халӗ районри 92 колхоз тырӑсене шӑварма пичкесем хатӗрлесе ситернӗ. Вӗсене ятарласа тунӑ урапасем ҫине вырнаҫтарса лартаҫҫӗ. Пӗвесене тата кӳлӗсене тастаса юсаҫҫӗ. Мӑн Сӗнтӗр ялсоветӗнчи колхозсем, тӗслӗхрен, пӗвесене хушса шыв ҫӳллӗшне хӑпартрӗҫ. Ҫырма хӗррисенче лартнӑ пахча-ҫимӗҫсем патне ҫав кӳлӗсемпе пӗвесенчен канавсем тӑрӑх шыв антармалла турӗҫ. Халӗ районри колхозсенче пурӗ 173 пӗвене тасатса юсанӑ, 44 ҫӗрте ҫӗнӗ пӗвесем тума тытӑннӑ.

С. СОКОЛОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Ҫӗрулми лартнӑ вырӑнсене сӳрелеҫҫӗ

КАЛИНИНО. Тапхӑр-тапхӑр вӑйлӑ ҫӑмӑр ҫунӑ хыҫҫӑн уяр ҫанталӑк тӑни тӑпрана хытӑ пусарса пирчетсе хӑварчӗ. Акнӑ участоксем ҫинче ҫиелти тӑпра типсе хытса юлчӗ. Ҫакӑ вӑл акнӑ тырӑсене тата ҫӗрулмине те шӑтса тухма чарать, ҫӗрӗн нӳрлӗхне хӑварт пӗтерет.

Партипе правительство хушнӑ тӑрӑх, пирӗн районри колхозсем халь тӑпран пирченнӗ сийне пӗтермелли мерӑсем йышӑнаҫҫӗ. Ҫурхи тырӑсем акнӑ вырӑнсене, уйрӑмах ҫӗрулми вырӑнӗсене, сӳрелесе кӑпкалатаҫҫӗ. Паянхи кун ҫӗрулми лартнӑ вырӑнсене пурӗ 200 гектар ытла сӳреленӗ. Ҫак кунсенчех ҫурхи тырӑсен калчисене те сӳрелеме тытӑнаҫҫӗ.

Фронтран килнӗ ҫырусем

Нимӗҫсем — ҫынсем мар, сынсиенсем

Ку хӑрушӑ историе мана пирӗн боецсем халь ҫеҫ ирӗке кӑларнӑ П. поселокӗнчи колхозница Варвара Евсеева Капустина каласа пачӗ.

Тӗрӗссипе, ку поселок ҫук ӗнтӗ. Фашистла тискер кайӑксем унта нимӗн те хӑварман: килӗ-ҫурчӗсене ҫунтарса янӑ, ҫыннисене вӗлерсе пӗтернӗ. Варвара Евсеевнӑна хӑйне те эпир урӑх ялта тӗл пултӑмӑр, килҫуртсӑр, ҫемьесӗр тӑрса юлнӑ хыҫҫӑн вӑл халь тӑванӗсем патӗнче, хӑйне нимӗҫ ҫынҫиенӗсем кӳнӗ калама ҫук пысӑк хуйха тӳссе иртерсе пурӑнать.

Нимӗҫсем унӑн упӑшкине, ултӑ ачине тата ывӑлӗн ывӑлне вӗлернӗ. Нимӗҫсем унӑн мӗнпур выльӑхне хӑваласа кайнӑ, килне ҫунтарса янӑ. Унӑн пурнӑҫӗнче мӗн хакли пулнӑ — ҫавсене нимӗҫсем пӗтӗмпех туртса илнӗ...

Вӑл акӑ мӗнле пулса иртнӗ.

Ку района нимӗҫсем пырса кӗрсенех, таврари вӑрмансенче партизансем ӗҫлеме тытӑннӑ. Нимӗҫсем вӗсене тем пекех пӗтерсе тӑкма тӑрӑшнӑ, анчах партизансем юмахри паттӑрсем пекех пулнӑ, никама та курӑнман, тӑшмана кӗтмен ҫӗртен пыра-пыра ҫапнӑ. Партизансене таврари халӑх пулӑшса тӑнӑ. Колхозниксем вӗсене апат-ҫимӗҫ пырса панӑ, хӗрарӑмсем вӗсене валли ҫӑкӑр пӗҫернӗ, кӗпе-йӗм ҫунӑ.

Нимӗҫсен ҫар эшелонӗсем ҫул ҫинчен ҫырманалла сирпӗннӗ. Вӗсен склачӗсем ҫуннӑ, постра тӑракан часовойӗсем ҫухалнӑ. Обозӗсем кирлӗ ҫӗре ҫитеймен.

Нимӗҫсем вара хӑйсен пӗтӗм тарӑхне мирлӗ халӑх ҫине тӳнтерме шут тунӑ. Партизансене вӗсем нимӗн те тӑвайман, вӗсемпе кӗрешме вӑй ҫитеймен, анчах ним хӳтлӗхсӗр хӗрарӑмсемпе ачасене пӗтерсе хума вӑй нумай кирлӗ пулман.

Тӗппипех пӗтерсе хума темиҫе яла палӑртнӑ, вӑл шутах Варвара Евсеевна хӑйӗн упӑшкипе, ултӑ ачипе тата ывӑлӗн ывӑлӗпе пурӑннӑ поселок та кӗнӗ.

Нимӗҫсем пирӗн пата кӑнтӑрла иртсен килсе кӗчӗҫ, — тесе каласа парать Варвара Евсеевна, — ним ҫинчен пӗлтермесӗрех ялти пӗтӗм халӑха килӗсенчен хӑваласа кӑларчӗҫ те ял хӗррине пухрӗҫ. Ҫавӑнтах арҫынсене пирӗнтен уйӑрса пӗр кӗлете хуса хупрӗҫ. Пире, хӗрарӑмсемпе ачасене, пӳрте хупрӗҫ. Арҫынсене пурне те полицие илсе каяҫҫӗ, терӗҫ. Пире нимӗн те каламарӗҫ, ҫавӑнпа та эпир ним чухламасӑрах пӳртре пӗр-икӗ сехет лартӑмӑр. Анчах та нимӗҫсем темле ырӑ мар ӗҫ тума шут тытнине чӗре туйрӗ пирӗн — ахальрен пухман ӗнтӗ вӗсем пире!.. Унтан пире хире хӑваласа кӑларчӗҫ те — ҫул тӑрӑх кӳршӗри ял еннелле кайма хушрӗҫ. Эпир утрӑмӑр. Пирӗн хыҫҫӑн автоматлӑ нимӗҫ салтакӗсем пычӗҫ. Пӗр аллӑ-утмӑл чалӑш пек кайсан, тахӑшӗ хаяррӑн команда пачӗ:

— Н-аправо!

Эпир пӑрӑнтӑмӑр. Халь ӗнтӗ ҫулсӑр-мӗнсӗрех, вӑрман еннелле утрӑмӑр.

— Ан саланӑр! Пӗр-перинпе юнашар пырӑр! — каллех команда пачӗ тахӑшӗ.

Эпир, нимӗн те ӑнланмасӑр, ку приказа та итлерӗмӗр. Манӑн икӗ хӗрача — Зояпа Таня ман умра утса пычӗҫ, пилӗк ҫулхи Витяна эп алра ҫӗклесе утрӑм. Сасартӑк пирӗн хыҫра пулеметсемпе автоматсем пӗр харӑс шатӑртатма тапратрӗҫ... Нимӗҫсем пире ҫурӑмран пеме тытӑнчӗҫ! Пурте ӳкрӗҫ. Эпӗ те ӳкрӗм, хамӑн кӗлеткепе Витяна хупларӑм. Уйра каласа памалла мар хӑрушла шав, кӑшкӑру, йынӑшу пуҫланса кайрӗ. Нимӗҫсем, ним ҫине пӑхмасӑрах, чарӑна пӗлмесӗр пereҫҫӗ... Тахӑш самантра эпӗ пуҫа ҫӗклерӗм те, манӑн Зояпа Таня вилсе выртнине куртӑм. Манӑн ӑс-тӑн пӑтранма пуҫларӗ... Ҫав вӑхӑтра тепӗр пуля Битя пуҫӗнчен пырса ҫапрӗ те, унӑн пуҫ шӑмми катӑлса ывтӑнчӗ, пуҫ мимийӗ мана питрен сирпӗнчӗ. Вара эпӗ ӑнран кайрӑм пулмалла. Пӗр хушӑ мӗн пулнине астумастӑп...

...Каяллах тӑна кӗрсе куҫӑма уҫсан, эпӗ пире хыҫалтан пеме пӑрахнине тавҫӑрса илтӗм. Ҫӗкленсе тӑма хӑраса, итлеме тытӑнтӑм. Нимӗҫ салтакӗсем халь юнлӑ вилесем хушшипе ҫӳреҫҫӗ мӗн. Кам вилеймен, кам сывлать-ха — ҫавӑн патне пырса, ӑна персе вӗлереҫҫӗ. Ман тӗлте виҫӗ хутчен иртсе кайрӗҫ, анчах эпӗ хамӑн вилнӗ ачасем хушшинче ним хускалмасӑр ӳпне выртрӑм та, мана вӗсем хама та вилнӗ терӗҫ пулмалла — тизмерӗҫ...

Ҫав хушӑрах ялтан вӑйлӑ взрывсем илтӗнчӗҫ. Кайран пӗлтӗмӗр ун ҫинчен: нимӗҫсем унта пирӗн арҫынсене вӗлернӗ пулнӑ. Вӗсене нимӗҫсем пурне те подвала хӑваласа кӗртнӗ те, алӑк витӗр гранатӑсем пӑрахнӑ. Вара пӗр ҫын та чӗррӗн юлман. Вӗсем хушшинче манӑн упӑшка Афанасий Григорьевич, тата икӗ ывӑл — Димитрипе Степан пӗтнӗ.

Пурне те вӗлерсе пӗтерсен, нимӗҫсем пире улӑмпа витрӗҫ те — кайрӗҫ. Эпӗ тӗттӗм пуличченех ним хускалмасӑр выртрӑм. Пирӗн поселок унччен тӗппипех ҫунса пӗтрӗ— ӑна ҫав пирӗн арҫынсене гранатӑсемпе персе вӗлернӗ хыҫҫӑнах чӗртсе янӑ вӗсем.

Ҫӗрле вара вӑрман урлӑ каҫса, хамӑн тӑвансем патне ҫитрӗм. Каласа патӑм...

* * *

Ҫак юнлӑ преступленисене ҫынсем мар — нимӗҫсем, ҫынҫиенсем тӑваҫҫӗ. Нимӗҫ вӑл—кирек мӗнле тискер кайӑкран та хӑрушӑрах, тискертерех.

Нихӑҫан та манмӑпӑр эпир ку тискерлӗхсене! Совет хӗрарӑмӗсемпе ачисен айӑпсӑр таса юнне юхтарнӑшӑн питех те хаклӑ сапламалла пулӗ нимӗҫсен! Эпир ӗнтӗ сахал мар пӗтернӗ вӗсене, малашне тата ытларах, тата хытӑрах, хамӑрӑн ҫӗр ҫинче пӗр юнлӑ фашист юлмиччен пӗтерӗпӗр. Пирӗн урамра та праҫник пулӗ!

Старши лейтенант
ЛЕОНИД АГАКОВ.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Коммунист ертсе пыракан артельре

ШӐХАСАН. Районри предприятисемпе учреждениесенче социализмлӑ ӑмӑрту вӑйланчӗ. Кашни работник тухӑҫларах ӗҫлессишӗн тӑрӑшать.

— Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнчи приказӗ пире ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума чӗнет. Эпир аслӑ ҫулпуҫ чӗнӗвӗ ҫине ӗҫ тухӑҫлӑхне икӗ-виҫӗ хут хӑпартнипе ответлетпӗр, — теҫҫӗ «Сталь» промартельри рабочисемпе работницӑсем.

«Сталь» промартель (председателӗ коммунист М. Иванов юлташ) коллективӗ социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, иккӗмӗш квартал планне 200 процент пурнӑҫлама обязательство илнӗ. Халӗ илнӗ обязательствӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырать.

Апрель уйӑхӗн ӗҫ планне 151 процент тултарнӑ. Ҫӗвӗ ҫӗлекен цехри М. Яковлева, А. Андреев бригадирсем ӗҫре уйрӑмӑнах паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. М. Яковлева юлташӑн бригадинчи Варвара Филиппова, А. Данилова, М. Николаева юлташсем кашни куллен заданисене 200 процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫавӑн пекех А. Андреев юлташӑн бригадинчи Вера Григорьева тата Татьяна Григорьева юлташсем те ӗҫ нормисене кулленех 180—200 процент тултараҫҫӗ. Паха ӗҫӗн результачӗ куҫ умӗнчех, ҫӗвӗ ҫӗлекен цех май уйӑхӗнчи плана ытлашшипех пурнӑҫларӗ.

Атӑ-пушмаксем юсакан мастерскойри рабочисем те хӑйсен нормисене икӗ-виҫӗ хут ирттерсе тултараҫҫӗ. Б. Берлин юлташ кашни кунах ӗҫ нормине 200—250 процент тултарса ӗҫлет.

Артель коллективӗ июнӗн 1-мӗшӗ тӗлне иккӗмӗш квартал планне пурнӑҫлассишӗн ывӑнма пӗлмесӗр кӗрешет.

В. Веселов.

Заводри чӑваш рабочийӗсем хушшинче агитациллӗ-ӑнлантарулла ӗҫ мӗнле пырать

Бунин юлташ директор заместителӗ пулса ӗҫлекен заводра чылай чӑваш ҫамрӑкӗсем производствӑра кӑтартуллӑн ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсенчен хӑшӗсем халь ҫеҫ ӗҫлеме пуҫланӑ пулин те, ӗҫӗн техникине пӗлсе ҫитсе, кулленхи задание 2—3 хут тултараҫҫӗ.

Тӗслӗхрен, пӗр цехри комсомолкӑсем-слесарьсем О. Андреева, М. Ананьева, стахановка-рационализатор Зоя Данилова юлташсем кашни ӗҫ нормине 250—260 процент тултараҫҫӗ. Токарь Редкин юлташ паха тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫленӗшӗн Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотине илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Чӑваш ҫамрӑкӗсен ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пыма чӑваш чӗлхипе агитациллӗ-ӑнлантарулла ӗҫе туса пыни нумай пулӑшрӗ.

Нумай пулмасть ВКП(б) Горкомӗн лекторӗ Орленко юлташ чӑваш чӗлхипе тӗнчери лару-тӑру ҫинчен доклад туса пачӗ. Доклада кашниех тимлӗн итлерӗҫ. Эпир ҫакнашкал докладсем час-часах туса ирттеретпӗр. Кунсӑ[illegible] пуҫне, чӑваш ачисен вечерӗсем пулаҫҫӗ. Ҫак кунсенче чӑваш халӑх поэчӗ—орденоносец Шелеби юлташ хӑйӗн ирсӗр тӑшмана хирӗҫ кӗрешме чӗнекен хумханулла сӑввисене каласа пачӗ. Унӑн янӑрулла сӑввисем пурин кӑмӑлне те кайрӗҫ.

Заводри нумай тиражлӑ хаҫатра та цехсенчи стена хаҫачӗсем ҫине чӑваш рабочийӗсем чӑвашла заметкӑсем ҫырма пуҫларӗҫ. Заводра чӑваш чӗлхипе наглядлӑ агитацие те пуҫарса ятӑмӑр.

Эпир чӑваш рабочисем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе тӑтӑшах туса пыма уйрӑм агитколлектив организацилерӗмӗр. Агитколлектив чӑвашсенчен хут сахалтарах пӗлекенсене вӗрентес ӗҫе те йӗркелерӗ. Ку ӗҫре агитколлектив руководителӗ инженер-коммунист Максимов юлташ пӗтӗм вӑйне хурса ӗҫлет.

Чӑваш рабочийӗсем нумай тиражлӑ хаҫат ҫумӗнчи литература кружокне те активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Вӗсен ӗҫлес тата вӗренес хастарлӑхӗ пысӑк. Кашни ӗҫрех хӑйсен пултарулӑхне ӳстерсе пыраҫҫӗ.

Е. Огородникова.

„Илемлӗ литература“ альманахӑн ҫӗнӗ номерӗсем

Юлашки уйӑхсенче Чӑваш совет писателӗсен союзӗ кӑларса тӑракан «Илемлӗ литература» альманахӑн 12—13—14-мӗш номерӗсене хатӗрлесе пичете панӑ. Пур номерсенче те пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех писатель-фронтовиксен произведенийӗсем пичетленеҫҫӗ. Альманахӑн проза пайӗнче М. Данилов-Чалдун, Леонид Агаков, К. Пайраш, Хветӗр Уяр, В. Долгов-Хударсем, Степан Аслан калавӗсемпе повеҫӗсем пулаҫҫӗ.

Поэзи пайӗнче Ухсай Яккӑвӗ, Аркадий Эсхель, Стихван Шавлы, Уйӑп Мишши, Александр Алга, Иван Малгай сӑввисемпе поэмисем пичетленеҫҫӗ.

Аркадий Эсхелӗн «Ӑмӑрткайӑк» ятлӑ поэми пӗтӗмӗшпех альманахӑн 14-мӗш номерӗнче пичетленсе тухать.

Атӑл тӑрӑхӗнчи художниксен картинисен выставки

СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Искусство ӗҫӗсен управленийӗ йышӑннӑ тӑрӑх, Атӑл тӑрӑхӗнчи художниксен отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ ҫинчен ҫырнӑ картинисен выставки уҫӑлать. Выставка Хусан, Горький, Куйбышев, Саратов хулисенче уҫӑлмалла. Ҫав выставкӑна хутшӑнас пирки Чӑваш художникӗсен союзӗн правленийӗ канашлу туса иртернӗ. Халӗ выставкӑна тӑратма картинӑсем суйлаҫҫӗ.

Чӑваш художникӗсенчен выставкӑра Спиридонов, Сверчков, Ю. Зайцев, А. Лобанов тата ыттисен картинисем те пулаҫҫӗ.

НОВОРОССИЙСКРАН ҪУРҪӖР-ХӖВЕЛТУХӐҪНЕРЕХРЕ ПУЛНӐ СЫВЛӐШРИ ҪАПӐҪУСЕМ

Майӑн 27-мӗшӗнче Новороссийскран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн сывлӑшри вӑйсем пирӗн войскӑсемпе ҫар объекчӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахма хӑтланнӑ нимӗҫ авиацийӗпе ҫапӑҫнӑ. Тӑшман авиацийӗ тапӑннине ӑнӑҫлӑн сирсе пӑрахса, пирӗн сывлӑшри вӑйсем тӑшман войскисем ҫине тата ҫар объекчӗсем ҫине бомбӑсем нумай чӑрахнӑ.

Пӗр кун хушшинче сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 48 самолетне персе ӳкернӗ. Кунсӑр пуҫне, зенитлӑ артиллерирен персе, нимӗҫсен 16 самолетне персе ӳкернӗ. Ҫапла вара пӗр кун хушшинче пӗтӗмпе тӑшманӑн 64 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Боевой заданирен пирӗн 13 самолет таврӑнман.

Ют ҫӗршывсенче

ХӖҪПӐШАЛА АРЕНДА ЙӖРКИПЕ Е КИВҪЕН ПАРАССИ ҪИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОН ТӐРӐХ АМЕРИКА ПАНӐ ПУЛӐШУ

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен представительсен палатин укҫа-тенкӗ парас ыйтусене пӑхса тухакан комиссин ларӑвӗнче хӗҫпӑшала аренда йӗркипе е кивҫен параси ҫинчен калакан закона пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе ӗҫлекен уполномоченнӑй Стеттиниус сӑмах тухса каланӑ. Ҫав лару ҫинчен пӗлтерекен отчетра ҫапла каланӑ: ҫав закона никӗсе хурса тӑвакан килӗшӳсене Стеттиниус ҫакӑн пек панӑ: вӗсем «снабжени ыйтӑвӗсенчи пӗтӗмӗшлӗ ҫар стратегийӗн пичех те кирлӗ элеменчӗсем пулса тӑраҫҫӗ», — тенӗ. Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем, Англипе тата Совет Союзӗ, — тенӗ Стеттиниус, — пӗрлешӳллӗ нацисем ҫав тери нумай хӗҫпӑшал тӑвакан виҫӗ питӗ пысӑк арсеналсем пулса тӑраҫҫӗ, тенӗ.

Малалла Стеттиниус ҫакна пӗлтернӗ: Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем ҫав закон тӑрӑх ҫак ҫулхи майӑн 1-мӗшӗччен панӑ пулӑшу, укҫапа шутласан, 11 миллиард долларлӑх пулать. Ҫитес 14 уйӑха 8 миллиард доллартан ытла кирлӗ пулать. Ҫав суммӑна тӗрлӗ ҫӗршывсем тӑрӑх малтанлӑха ҫакӑн пек пайласа хунӑ: Совет Союзне 2,5 миллиард долларлӑх, Англие — 4.213 миллион долларлӑх, Австралипе Ҫӗнӗ Зеландие — 328 миллион долларлӑх, Британин ытти владенийӗсене — 167 миллион долларлӑх, Индипе Китая — 252 миллион долларлӑх, ытти ҫӗршывсене — 637 миллион долларлӑх.

Расходласа пӗтермен 2.100 миллион доллар сумне тата ҫӗнӗрен хушса памалла пулнӑ.

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен представительсен палати ҫав ҫӗнӗрен укҫа хушса памалли ҫинчен калакан законопроекта ырланӑ. (ТАСС).

АНГЛИРЕ ҪАР НУШИСЕМ ВАЛЛИ ТАТА ПӖР МИЛЛИАРД КӖРЕНКЕ СТЕРЛИНГ ХУШСА ПАНӐ

ЛОНДОН, майӑн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Англире общинӑсен палати ҫар нушисем валли пӗр миллиард кӗренке стерлинг ҫӗнӗрен хушса памалли законопроекта пӗр сасӑпа ырланӑ.

КАНАДА ВОЙСКИСЕН ҪӖНӖ ПАЙӖ АНГЛИЕ ПЫРСА ҪИТНӖ

ЛОНДОН, майӑн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англи порчӗсенчен пӗрине Канада войскисен ҫӗнӗ пайӗ ӑнӑҫлӑн пырса ҫитнӗ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙӖ СИЦИЛИПЕ САРДИНИЕ ТАПӐННИ

ЛОНДОН, майӑн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ тӑрӑх, союзниксен авиацийӗ ӗнер Сицилири Комизо аэродромне тапӑннӑ. Сицилири, вӑл шутра Понте Оливари, самолетсем лармалли вырӑнсем ҫине те бомбӑсем пӑрахнӑ.

Союзниксен авиацийӗ тӑшманӑн Сардинири объекчӗсене те пыра-пыра ҫапнӑ. Пантеллери утравне ҫӗнӗрен атакӑланӑ.

Пӗлтерӳ

Майӑн 29-мӗшӗнче, каҫхине 8 сехетре ВКП(б) Горкомӗн Парткабинетӗнче (Чувашски урам, 6) агитколлективсен тата политорганизаторсен руководителӗсен семинарӗ пулать.

Руководительсен пурин те обязательнӑй йӗркепе пымалла.

ВКП(б) Горкомӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Майӑн 31-мӗшӗнче, каҫхине 8 сехетре Главсуд ҫуртӗнче Шупашкар хулинчи предприятисенчи, организацисенчи тата учрежденисенчи комсод председателӗсен, главнӑй тата старши бухгалтерсен канашлӑвӗ пулать.

Асӑннӑ ҫынсен пурин те канашлӑва обязательнӑй йӗркепе пымалла.

ГОРИСПОЛКОМ.

Шупашкарти эрех комбинатне ялхуҫалӑхӗнче ялан ӗҫлеме рабочисем кирлӗ. Пӗччеңнисене общежити параҫҫӗ, столовӑй пур, кашнине хӑйшӗн пахча-ҫимӗҫ лартса тума ҫӗр участокӗ параҫҫӗ.

Управленире ӗҫлеме шоферсемпе стажерсем кирлӗ.

Пӗлес текенсем 9—18 сехетсем хушшинче ҫак адреспа пырса ыйтма пултараҫҫӗ: Шупашкар хули, Калинин урамӗ, 51, адрсен отделӗ.
2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн—0—67, редакци секретарӗн—4—26, парти пурнӑҫ пайӗн—3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗн—5—31, издательство конторин—0—23.

Типография № 1. Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР Заказ № [illegible]. Ф. 6. 53 84 п. л